78-162

# ЧĂВАШ
# АВТОНОМИЛЛĔ СОЦИАЛИЗМЛĂ СОВЕТ РЕСПУБЛИКИН
# КОНСТИТУЦИЙĔ

(ТĔП ЗАКОНĔ)

ЧĂВАШИЗДАТ — 1978

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# ЧĂВАШ
# АВТОНОМИЛЛĔ СОЦИАЛИЗМЛĂ СОВЕТ РЕСПУБЛИКИН
# КОНСТИТУЦИЙĔ

(ТĔП ÇАКОНĔ)

*Чăваш АССРĕн
тăххăрмĕш суйлаври
Верховнăй Совечĕн
черетсĕр саккăрмĕш сессийĕнче
1978 çулхи майăн 31-мĕшĕнче
йышăннă*

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1978

34С
К65

Государственная
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
„4" августа 1978 г.
№

К $\frac{11002-107}{М\ 136\ (03)-78}$ 13—78

© Чувашское книжное издательство, 1978 г.

# ЧĂВАШ АВТОНОМИЛЛĔ СОЦИАЛИЗМЛĂ СОВЕТ РЕСПУБЛИКИН ҪКОНСТИТУЦИЙĔ (ТĔП ЗАҪКОНĔ)

Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республикин халăхĕ, наукăллă коммунизм идейисем вĕрентнĕ пек ĕҫлесе, хăй пĕтĕм совет халăхĕн уйрăлми пайĕ пулнине ăнланса, ССР Союзĕн Ҫконституцийĕпе тата РСФСР Ҫконституцийĕпе килĕшӳллĕн ҫак Ҫконституцие йышăнать, ун ҫинчен пĕлтерет.

## I. ЧĂВАШ АССРĕн ОБЩЕСТВО СТРОЙĔПЕ ПОЛИТИҪКА НИҪКĔСĔСЕМ

### 1 сыпăк.

### ПОЛИТИҪКА СИСТЕМИ

**1 статья.** Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республики — пĕтĕм халăхăн социализмлă государстви, вăл республикăри рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин, мĕнпур наци ĕҫҫыннийĕсен ирĕкĕпе интересĕсене палăртать.

**2 статья.** Чăваш АССРĕнче пĕтĕм влаҫа халăх тытса тăрать.

Халăх государство влаҫне халăх депутачĕсен Совечĕсем урлă пурнăҫласа пырать. Советсем Чăваш АССРĕн политика ниҪкĕсĕ пулса тăраҫҫĕ.

Государствăн ытти мĕнпур органĕсем халăх депутачĕсен Совечĕсен контролĕнче тăраҫҫĕ, вĕсене отчет параҫҫĕ.

**3 статья.** Совет государстви демократиллĕ централизм принципĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленсе тăрать, ҫав принциппа ĕҫлет: государство влаҫĕн мĕнпур органĕсене аялтан пуҫласа ҫӳле ҫитиех суйласа лартаҫҫĕ, вĕсем халăха отчет парса тăраҫҫĕ, аслăрах органсен решенийĕсем кĕҫĕнрех органсемшĕн ҫирĕп пурнăҫламалли решенисем пулса тăраҫҫĕ. Демократиллĕ центра-

лизм пĕрлĕхлĕ руководствăна вырăнти пуçарулăхпа тата творчествăлла активлăхпа, государствăн кашни органĕ тата должноçри кашни çын хăйне хушнă ĕçшĕн ответлă пулнипе çыхăнтарса тăрать.

**4 статья.** Совет государстви, унăн мĕнпур органĕсем социализмлă законлăха тĕпе хурса ĕçлеççĕ, право йĕркине, общество интересĕсене, граждансен прависемпе ирĕклĕхĕсене сыхлаççĕ.

Государствăпа общество организацийĕсем, должноçри çынсем СССР Конституцине, РСФСР Конституцине, Чăваш АССР Конституцине тата совет законĕсене пăхăнма тивĕç.

**5 статья.** Государство пурнăçĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсене пĕтĕм халăхпа сӳтсе явма, çавăн пекех пĕтĕм халăхпа сасăлама (референдума) тăратаççĕ.

**6 статья.** Совет обществине ертсе, çул кăтартса пыракан вăй, унăн политика системин, государствăпа общество организацийĕсен тĕп пайĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ пулса тăрать. КПСС халăхшăн пурăнать, халăхшăн ĕçлет.

Марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕпе хĕçпăшалланнă Коммунистсен партийĕ общество аталанăвĕн тĕп малашлăхне, ССР Союзĕн шалти тата тулашри политикин çул-йĕрне кăтартса парать, совет халăхĕн пултарулла аслă ĕçне ертсе пырать, унăн коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешĕвне план тăрăх, наука вĕрентнĕ пек йĕркелесе пырать.

Партин мĕнпур организацийĕсем СССР Конституцийĕнчен иртмесĕр ĕçлеççĕ.

**7 статья.** Професси союзĕсем, Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕ, кооператив организацийĕсемпе ытти обществăлла организацисем хăйсен уставри задачисемпе килĕшӳллĕн государствăпа общество ĕçĕсене йĕркелесе пыма, политика, хуçалăх тата социаллă пурнăçпа культура ыйтăвĕсене татса пама хутшăнаççĕ.

**8 статья.** Ĕç коллективĕсем государствăпа общество ĕçĕсене сӳтсе явма тата татса пама, производствăпа социаллă пурнăç аталанăвне планлама, кадрсем хатĕрлесе вĕсене вырнаçтарса тухма, предприятисемпе учреждениесене тытса пырас, ĕçпе йăла условийĕсене лайăхлатас ыйтусене, производствăна аталан-

тармашкăн, çавăн пекех социаллă-культурăллă мероприятисем валли тата пурлăхпа хавхалантармашкăн уйăракан укçа-тенкĕпе усă курас ыйтусене сӳтсе явма, вĕсене татса пама хутшăнаççĕ.

Ĕç коллективĕсем социализмлă ăмăртăва аталантараççĕ, малта пыракан ĕç меслечĕсене сарма, ĕç дисциплинине çирĕплетме пулăшаççĕ, хăйсен членĕсене коммунизмла нравственность майлă воспитани параççĕ, вĕсен политикăллă ăнланулăхне, культурине тата професси квалификацине ӳстерме тăрăшаççĕ.

**9 статья.** Совет обществин политика системи аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕ — социализмлă демократие малалла сарса пырасси: гражданcене государствăпа общество ĕçĕсене йĕркелесе пыма анлăрах та анлăрах хутшăнтарасси, государство аппаратне лайăхлатса пырасси, общество организацийĕсен активлăхне ӳстересси, халăх контрольне вăйлатасси, государствăпа общество пурнăçĕн право никĕсне çирĕплетесси, халăха анлăрах пĕлтерсе тăрасси, общество шухăшне ялан шута илесси.

## 2 сыпăк.

## ЭКОНОМИКА СИСТЕМИ

**10 статья.** Чăваш АССРĕн экономика системин никĕсĕ — производство хатĕрĕсен социализмлă харпăрлăхĕ, вăл государство (пĕтĕм халăх) харпăрлăхĕн тата колхозсемпе кооперации харпăрлăхĕн формиллĕ пулать.

Профсоюз организацийĕсемпе ытти обществăлла организацисен хăйсен уставри задачисене пурнăçа кĕртме кирлĕ пурлăхĕ те социализмлă харпăрлăх шутланать.

Государство социализмлă харпăрлăха сыхлать, ăна пуянлатса пыма условисем туса парать.

Социализмлă харпăрлăхпа харпăр хăй пуяс тата ытти майпа пайта курас шутпа усă курма никамăн та право çук.

**11 статья.** Государство харпăрлăхĕ вăл — пĕтĕм совет халăхĕн пĕрлехи пуянлăхĕ, социализмлă харпăрлăхăн тĕп форми.

Çĕр, çĕр айĕнчи пуянлăхсем, шывсем, вăрмансем государство аллинче кăна тăраççĕ. Промышленноçри, строительствăри тата ялхуçалăхĕнчи производствăн тĕп хатĕрĕсем, транспортпа çыхăну хатĕрĕсем, банксем, государство организацилене сутуилӳ, коммуналлă хуçалăх предприятийĕсемпе ытти предприятисен пурлăхĕ, хуласенчи пурăнмалли çуртсен тĕп фончĕ, çавăн пекех государство задачисене пурнăçлама кирлĕ ытти пурлăх государство аллинче тăраççĕ.

**12 статья.** Колхозсен тата ытти кооперации организацийĕсен, вĕсен пĕрлешĕвĕсен хăйсен уставри задачисене пурнăçлама кирлĕ производство хатĕрĕсемпе ытти пурлăхĕ вĕсен харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ.

Колхозсем йышăнса тăракан çĕре вĕсене тӳлевсĕр тата ĕмĕрлĕхе усă курма çирĕплетсе параççĕ.

Государство колхозсемпе кооперации харпăрлăхне аталантарма, ăна государство харпăрлăхĕпе çывăхлатма пулăшать.

Колхозсем, çавăн пекех çĕрпе усă куракансем ыттисем те, çĕрпе эффективлă усă курма, ăна упрама, унăн пулăхне ӳстерсе пыма тивĕç.

**13 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен хăйсен харпăрлăхĕн никĕсĕ ĕçлесе илнĕ тупăш пулать. Уйрăм çын харпăрлăхĕнче куллен усă куракан, харпăр хăй тыткалакан япаласемпе ырлăхсем, килти хушма хуçалăхри япаласем, пурăнмалли çурт, ĕçлесе тунă перекет пулма пултараççĕ. Граждансен хăйсен харпăрлăхне тата ăна еткерлĕхе илсе юлмалли правăна государство сыхлать.

Граждансем хушма хуçалăх тытма (çав шутра выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк усрама), сад, пахча çитĕнтерме, çавăн пекех харпăр хăй валли пурăнмалли çурт лартма закон палăртнă йĕркепе уйăрса паракан çĕр участокĕсемпе усă курма пултараççĕ. Граждансем хăйсене уйăрса панă çĕр участокĕсемпе тĕрĕс усă курма тивĕç. Государствăпа колхозсем гражданесене хушма хуçалăха тытса пыма пулăшаççĕ.

Гражданcем хăйсен харпăрлăхĕнче тытакан е усă куракан пурлăхпа ĕçлемесĕр тупăш илме, общество интересĕсене сиен кӳме усă курмалла мар.

**14 статья.** Общество пуянлăхне ÿстермелли, халăхăн тата кашни совет çыннин пурнăçне лайăхлатмалли çăлкуç вăл — совет çыннисен эксплуатацирен ирĕклĕ ĕçĕ.

Социализм принципĕпе — «Кашнинчен — пултарулăхне кура, кашнине — ĕçне кура» принципа килĕшÿллĕн, государство ĕçпе потреблени виçине контроллесе тăрать. Вăл налог хумалли тупăшсенчен мĕн чухлĕ налог илмеллине палăртать.

Этемĕн обществăри вырăнĕ унăн обществăшăн усăллă ĕçĕнчен тата çав ĕç результачĕсенчен килет. Государство пурлăхпа тата мораль тĕлĕшĕнчен хавхалантарнине пĕр-пĕринпе çыхăнтарса пырса, новаторлăха, ĕç çине творчествăлла пăхнине хавхалантарса, ĕçлеве кашни совет çыннишĕн пурнăçра чи кирли туса хума пулăшать.

**15 статья.** Социализм вăхăтĕнче обществăлла производствăн чи аслă тĕллевĕ вăл — çынсен пурлăхпа ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен ÿссе пыракан ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтересси.

Ĕççыннисен творчествăллă активлăхĕпе, социализмла ăмăртупа, наукăпа техника прогресĕн çитĕнĕвĕсемпе усă курса, экономикăна ертсе пырас ĕçри формăсемпе меслетсене лайăхлатса, государство ĕç тухăçлăхне ÿстерес, производство эффективлăхĕпе ĕç пахалăхне лайăхлатас, халăх хуçалăхне динамикăллă, план тăрăх тата пропорциллĕ аталантарас ĕçсене йĕркелесе пырать.

**16 статья.** Чăваш АССР экономики РСФСР экономикин, СССР территорийĕнчи обществăлла производствăн, валеçÿпе улшăнăвăн мĕнпур сыпăкĕсене пĕрлештерсе тăракан пĕр пĕтĕм халăх хуçалăх комплексĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать.

Экономикăна ертсе пырас ĕçе экономикăпа социаллă пурнăçа аталантармалли государство планĕсем тăрăх, отрасльпе территори принципĕсене шута илсе туса пыраççĕ, централизациленĕ управление предприятисем, пĕрлешÿсем тата ытти организацисем хуçалăха хăйсем тĕллĕн тытса пынипе, вĕсен пуçарулăхĕпе çыхăнтараççĕ. Кунта хуçалăх расчечĕпе, усăмпа, хăйхаклăхпа, экономикăн ытти хатĕрĕсемпе тата стимулĕсемпе активлă усă кураççĕ.

**17 статья.** Чăваш АССРĕнче, законпа килĕшÿллĕн, алăстипе

ремесла промыслисенче, ялхуçалăхĕнче, халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре, çавăн пекех ытти йышши ĕçсенче çынсене уйрăм ĕçлеме ирĕк параççĕ, анчах çав ĕçсене граждансен хăйсен вăйĕпе тата хăйсен килйышĕнчи çынсен вăйĕпе кăна туса пымалла. Çынсем хăйсене уйрăммăн ĕçлессине государство йĕркелесе тăрать, çав ĕç обществăна усă кӳтĕр тесе тăрăшать.

**18 статья.** Хальхи тата пулас ăрусен интересĕсене шута илсе, Чăваш АССРĕнче çĕре тата çĕр айĕнчи пуянлăхсене, шыв ресурсĕсене, ӳсентăранпа чĕрчун тĕнчине сыхлама, вĕсемпе наука вĕрентнĕ пек тĕрĕс усă курма, сывлăшпа шыва таса тытма, çутçанталăк пуянлăхĕсене çĕнетсе пыма, этем пурăнакан тавралăха лайăхлатма кирлĕ мерăсем йышăнаççĕ.

## 3 сыпăк.

## СОЦИАЛЛĂ АТАЛАНУПА КУЛЬТУРА

**19 статья.** Чăваш АССРĕн социаллă никĕсĕ вăл — рабочисен, хресченсен тата интеллигенцин аркăнми çирĕп союзĕ.

Государство обществăн социаллă пĕрпеклĕхне вăйлатма — классем хушшинчи уйрăмлăхсене, хулапа ял, ăстăн ĕçĕпе вăйхал ĕçĕ хушшинчи пысăк уйрăмлăхсене пĕтерсе пыма, ССР Союзĕнчи мĕнпур нацисемпе халăхсене пур енĕпе те аталанма тата пĕр-пĕринпе çывăхланма пулăшать.

**20 статья.** «Кашнин ирĕклĕ аталанăвĕ вăл — пурне те ирĕклĕ аталанма кирлĕ услови» — коммунизмла çак идеалпа килĕшӳллĕн, государство граждансене хăйсен творчествăлла вăйĕсемпе, пултарулăхĕпе, ăсталăхĕпе усă курма, этеме пур енĕпе те аталанма кирлĕ чăн-чăн майсене сарса пырас тĕллев тытать.

**21 статья.** Государство ĕç условийĕсене лайăхлатма тата ĕçлеве сыхлама, ĕçе наука вĕрентнĕ пек организацилеме, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче производство процесĕсене комплекслă механизацилесе тата автоматизацилесе, алă вĕççĕн тăвакан йывăр ĕçе чакарма, малашне вара ăна пĕтĕмпех пĕтерме тăрăшать.

**22 статья.** Чăваш АССРĕнче ялхуçалăх ĕçне индустри ĕçĕсенчен пĕри туса хумалли, ялсенче халăха вĕрентес ĕç, культура, сывлăха сыхлас ĕç, суту-илӳпе обществăлла апатлану, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçпе коммуналлă хуçалăх учрежденийĕсен шутне ӳстермелли, ялсенчен лайăх поселоксем туса хумалли программа çирĕппĕн пурнăçланса пырать.

**23 статья.** Ĕç тухăçлăхĕ ӳссе пынă май государство ĕçшĕн тӳлессине, ĕççыннисен реальнăй тупăшĕсене ӳстерес çул-йĕре яланах çирĕп тытса пырать.

Совет çыннисен ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерме обществăн потреблени фончĕсене тăваççĕ. Государство, общество организацийĕсемпе ĕç коллективĕсене анлăн хутшăнтарса, çав фондсене ӳстерме тата тĕрĕс валеçме май туса парать.

**24 статья.** Чăваш АССРĕнче государствăн сывлăха сыхлас ĕç, социаллă обеспечени, суту-илӳпе обществăлла апатлану, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçпе коммуналлă хуçалăх системисем туса хунă, вĕсем аталанса пыраççĕ.

Государство халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçĕн мĕнпур сферисенче кооպераци организацийĕсемпе ытти обществăлла организацисем тăвакан ĕçсене хавхалантарса пырать. Вăл массăллă физкультурăпа спорта аталантарма пулăшать.

**25 статья.** Чăваш АССРĕнче халăха вĕрентес ĕçĕн пĕр пĕтĕм системи пур, вăл лайăхланса пырать, граждансене пĕтĕмĕшле пĕлӳ илме тата професси тĕлĕшĕнчен хатĕрленме май парать, çамрăксене коммунизмла воспитани пама, ăс-хакăлпа вăй-хал тĕлĕшĕнчен аталанма пулăшать, вĕсене ĕçлеме тата общество ĕçне туса пыма хатĕрлет.

**26 статья.** Общество ыйтăвĕсене шута илсе, государство наукăна план тăрăх аталантарса пырать, наука кадрĕсем хатĕрлет, наука тĕпчевĕсен результачĕсемпе халăх хуçалăхĕнче тата пурнăçăн ытти сферисенче усă курас ĕçе йĕркелет.

**27 статья.** Государство ăс-хакăл пуянлăхĕсене сыхлама, нумайлатса пыма тата вĕсемпе совет çыннисене нравственноçпа эстетика енĕпе воспитани парас, вĕсен культура шайне ӳстерес ĕçре анлăн усă курма тăрăшать.

Чăваш АССРĕнче профессиллĕ искусствăпа халăхăн худо-

жество пултарулăхне аталантарма пур майсемпе те хавхалантарассĕ.

## II. ГОСУДАРСТВО ТАТА УЙРĂМ ÇЫН

### 4 сыпăк.

### ЧĂВАШ АССР ГРАЖДАНЛĂХĔ. ГРАЖДАНСЕН ПРАВО ПĔРТАНЛĂХĔ

**28 статья.** ССР Союзĕнче туса хунă пĕр пĕтĕм союзлă гражданлăхпа килĕшӳллĕн Чăваш АССРĕн кашни гражданинĕ РСФСР тата СССР гражданинĕ пулса тăрать.

Совет гражданлăхне илес тата çухатас сăлтавсемпе йĕркене СССР гражданлăхĕ çинчен калакан законра палăртассĕ.

РСФСР гражданĕсемпе ытти союзлă республикăсен гражданĕсем Чăваш АССР территорийĕнче Чăваш АССР гражданĕсемпе пĕр пек правăсемпе усă курассĕ.

Чăваш АССР гражданĕсене чикĕ леш енче Совет государстви хӳтĕлет, вĕсен хутне кĕрет.

**29 статья.** Чăваш АССР гражданĕсем, мĕнле сийрен тухнине, социаллă пурнăçпа пурлăх тĕлĕшĕнчи уйрăмлăхсене, мĕнле раса тата мĕнле наци çынни, арçын е хĕрарăм пулнине пăхмасăр, мĕн чухлĕ вĕреннине, мĕнле чĕлхепе калаçнине, тĕн çине мĕнле пăхнине, мĕнле тата хăш ĕçре ĕçленине, ăçта пуrăннине тата ытти сăлтавсене пăхмасăр, закон умĕнче пĕр тан.

Чăваш АССР гражданĕсен право пĕртанлăхĕ экономика, политика пурнăçĕнче, социаллă пурнăçпа культура пурнăçĕнче пур çĕрте те пурнăçланса пырать.

**30 статья.** Чăваш АССРĕнче хĕрарăмпа арçыннăн правăсем пĕр тан.

Ку правăсене çапла пурнăçа кĕртсе пырассĕ: пĕлӳ илес тата профессие вĕренес тĕлĕшпе; ĕçре, уншăн тӳлес тата ĕçре пысăкрах вырăна уйăрса лартас, обществăпа политика тата культура ĕçне хутшăнтарас тĕлĕшпе хĕрарăмсене арçынсемпе пĕр тан майсем туса панипе, çавăн пекех хĕрарăмсен ĕçне, вĕсен

сывлăхне сыхлас енĕпе ятарласа мерăсем йышăннипе; хĕрарăмсене ĕçлеме те, ача пăхма та май паракан условисем туса панипе; ача амăшĕсемпе ачасене право енчен хӳтĕленипе, пурлăхпа тата мораль тĕлĕшĕнчен хавхалантарнипе, çав шутра йывăр çын хĕрарăмсемпе ача амăшĕсене тӳлевлĕ отпусксем тата ытти çăмăллăхсем панипе, пĕчĕк ачаллă хĕрарăмсен ĕç вăхăтне майĕпен чакарса пынипе.

**31 статья.** Чăваш АССРĕн тĕрлĕ расăллă тата национальноçлă гражданĕсен прависем пĕр тан.

Ку правăсем ССР Союзĕнчи мĕнпур нацисемпе халăхсене пур енĕпе те аталантармалли, вĕсене пĕр-пĕринпе çывăхлатмалли политика тытса пынипе, граждансене совет патриотизмĕпе социализмлă интернационализм майлă воспитани панипе, тăван чĕлхепе тата ССР Союзĕнчи ытти халăхсен чĕлхисемпе усă курма май панипе пурнăçланса пыраççĕ.

Граждансен расипе национальноçне кура вĕсен прависене тӳррĕнех е урăхла майпа хĕснĕшĕн, тӳррĕнех е урăхла майпа ыттисенчен асла хунăшăн, çавăн пекех пĕр-пĕр расăна е нацие ыттисенчен мала е кая хурас, ун çине тăшманла пăхас шухăша кирек мĕнле сарнăшăн та законпа айăплаççĕ.

**32 статья.** Ют çĕршыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене Чăваш АССРĕнче законпа палăртнă правăсемпе ирĕклĕхсем, çав шутра хăйсен уйрăм çын прависене, пурлăх, çемье тĕлĕшĕнчи тата ытти прависене хӳтĕлеме судран тата государствăн ытти органĕсенчен пулăшу ыйтмалли право гарантилеççĕ.

Чăваш АССР территорийĕнче пулнă чухне ют çĕршыв гражданĕсем тата гражданлăхсăр çынсем СССР Конституцине, РСФСР Конституцине, Чăваш АССР Конституцине хисеплеме тата совет законĕсене пăхăнма тивĕç.

## 5 с ы п ă к.

### ЧĂВАШ АССР ГРАЖДАНĔСЕН ТĔП ПРАВИСЕМ, ИРĔКЛĔХĔСЕМПЕ ОБЯЗАННОÇĔСЕМ

**33 статья.** Чăваш АССР гражданĕсем СССР Конституцийĕнче, РСФСР Конституцийĕнче, Чăваш АССР Конституцийĕн-

че, совет законĕсенче пĕлтернĕ тата гарантиленĕ социаллă-экономикăллă, политикăллă правăсемпе, уйрăм çын прависемпе тата ирĕклĕхĕсемпе туллин усă кураççĕ. Социаллă пурнăçпа экономика тата культура аталанăвĕн программисене пурнăçа кĕртсе пынăçемĕн социализм стройĕ граждансен прависемпе ирĕклĕхĕсене пысăклатса, пурнăç условийĕсене пĕрмаях лайăхлатса пырать.

Граждансем правăсемпе тата ирĕклĕхсемпе усă курни обществăпа государство интересĕсене, ытти граждансен прависене сиен кӳмелле мар.

**34 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен ĕçлев прави пур,— урăхла каласан, хăйсем мĕн чухлĕ тата мĕнле ĕçленине кура тата государство палăртнă чи пĕчĕк виçерен кая мар тӳлекен гарантиленĕ ĕç илмелли право,— çав шутра кăмăл туртнине, пултарулăхне, професси тĕлĕшĕнчен хатĕрленнине, вĕреннине кура тата обществăшăн кирлине шута илсе, професси, ĕç вырăнĕ тата ĕç суйласа илме право пур.

Ку правăпа усă курмалли майсене çаксем туса параççĕ: хуçалăхăн социализмлă системи, производителлĕ вăйсем пĕрмаях ӳссе пыни, профессие тӳлевсĕр вĕрентни, ĕç квалификацине ӳстерни, çĕнĕ специальноçсене вĕрентни, професси суйласа илме пулăшмалли тата ĕçе вырнаçтармалли системăсене аталантарни.

**35 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен кану прави пур.

Ку право çакăн пек майсемпе пурнăçа кĕрсе пырать: рабочисемпе служащисем валли 41 сехетрен иртмен ĕç эрни тунипе, чылай профессисемпе производствăсем валли кĕскерех ĕç кунĕ тунипе, çĕрлехи ĕç вăхăтне чакарнипе; çулсеренех тӳлевлĕ отпуск парса тăнипе, кашни эрнерех канмалли кунсем панипе, çавăн пекех культурăпа çутĕç учрежденийĕсемпе сывлăха çирĕплетмелли учреждениесене нумайлатнипе, массăллă спорта, физкультурăпа туризма аталантарнипе; пурăнакан вырăнта канма лайăх майсем тата пушă вăхăтпа тĕрĕс усă курмашкăн ытти условисем туса панипе.

Колхозниксен ĕç вăхăчĕпе кану вăхăчĕ мĕн чухлĕ пулмаллине колхозсем палăртаççĕ.

**36 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен сывлăха сыхламалли право пур.

Ку право çапла пурнăçа кĕрсе пырать: сывлăха сыхлас енĕпе ĕçлекен государство учрежденийĕсем тӳлевсĕрех квалификациллĕ медицина пулăшăвĕ панипе; граждансене сыватмалли тата вĕсен сывлăхне çирĕплетмелли учрежденисене нумайлатса пынипе; хăрушсăрлăх техникипе производство санитарине аталантарнипе тата лайăхлатнипе, профилактикăллă мероприятисене анлăн туса ирттернипе; тавралăха йĕркене кĕртме мерăсем йышăннипе; çитĕнекен ăру сывлăхĕшĕн уйрăмах тăрăшнипе, çав шутра ачасене вĕрентессипе тата ĕçе хăнăхтарассипе çыхăнман çĕрте ĕçлеттерме чарнипе; чирлесрен сыхланас тата чирлессине чакарас, граждансене активлă ĕçлемешкĕн вăрăм ĕмĕрлĕ тăвас тĕллевпе наука тĕпчевĕсене вăйлатса пынипе.

**37 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен ватăлсан, чирлесен, пачах ĕçлейми е пĕтĕм вăйпа ĕçлейми пулсан, çавăн пекех тăрантарса усракансăр тăрса юлсан материальнăй пулăшу илсе тăма право пур.

Ку правăна çапла гарантилеççĕ: рабочисене, служащисемпе колхозниксене социаллă страховани тунипе, вăхăтлăха ĕçлейми пулсан пособи панипе; çул çитсен, инвалид пулсан тата тăрантарса усракансăр тăрса юлсан государствăпа колхозсен вăйĕпе пенсисем тӳленипе; пĕтĕм вăйпа ĕçлейми пулнă граждансене ĕçе вырнаçтарнипе; ватăлса çитнĕ граждансемпе инвалидсемшĕн тăрăшнипе; социаллă обеспеченин ытти формисемпе.

**38 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен пурăнмалли çурт-йĕрпе усă курма право пур.

Ку право çапла пурнăçа кĕрсе пырать: государствăпа обществăн çурт-йĕр фондне аталантарнипе, ăна упранипе, кооперативсемпе уйрăм çынсене пурăнмалли çуртсем лартма пулăшнипе, пурăнмалли хăтлă çуртсем тумалли программăна пурнăçласа пынăçемĕн уйăрса паракан хваттерсене тĕрĕс, общественность контроллесе тăрса валеçнипе, çавăн пекех хваттершĕн тата коммуналлă пулăшушăн сахал тӳлеттернипе. Чăваш АССР гражданĕсем хăйсене уйăрса панă хваттерсене тирпейлĕ упрама тивĕç.

**39 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен вĕренӳ прави пур.

Ку право çапла пурнăçа кĕрсе пырать: пур çĕрте те тӳлевсĕр вĕрентнипе, çамрăксене пурне те обязательнăй йĕркепе вăтам пĕлӳ панипе, вĕренĕве пурнăçпа, производствăпа çыхăнтарса, профессипе техника пĕлĕвĕсем, специальнăй вăтам тата аслă пĕлӳ парас ĕçе анлă аталантарнипе; заочно тата каçхине вĕрентессине аталантарнипе; вĕренекенсемпе студентсене государство стипендийĕсем тата çăмăллăхсем панипе; шкул учебникĕсене тӳлевсĕр панипе; шкулта тăван чĕлхепе вĕренме май панипе; харпăр хăй тĕллĕн вĕренме условисем туса панипе.

**40 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен культура çитĕнĕвĕсемпе усă курма право пур.

Ку право çапла пурнăçа кĕрсе пырать: хамăр çĕршывпа тĕнче культурин государствăпа общество фончĕсенче упранакан пуянлăхсемпе паллашма пурне те май панипе; культурăпа çутĕç учрежденийĕсене аталантарнипе тата вĕсене республика территорийĕнче пĕр пек вырнаçтарса тухнипе; телевиденипе радиона, кĕнеке тата хаçат-журнал кăларас ĕçе, тӳлевсĕр усă курмалли библиотекăсене аталантарнипе; урăх государствăсемпе культура енĕпе тытакан çыхăнусене сарса пынипе.

**41 статья.** Чăваш АССР гражданĕсене коммунизм строительствин тĕллевĕсемпе килĕшӳллĕн наука, техника тата художество творчестви енĕпе ирĕклĕх гарантилеççĕ. Çак ирĕклĕх вăл наука тĕпчевĕсене, изобретенипе рационализаци ĕçне анлă сарса пынипе, литературăпа искусствăна аталантарнипе пурнăçланса пырать. Государство çавна валли кирлĕ материальнăй условисем туса парать, ирĕклĕ обществăсемпе творчество союзĕсене пулăшса тăрать, изобретенисемпе рационализаторла сĕнӳсене халăх хуçалăхĕнче тата пурнăçăн ытти сферисенче ĕçе кĕртессине йĕркелет.

Авторсен, изобретательсемпе рационализаторсен прависене государство хӳтĕлет.

**42 статья.** Чăваш АССР гражданĕсен государствăпа общество ĕçĕсене йĕркелесе пырас ĕçе, законсене, пĕтĕм государствăпа вырăнти пĕлтерĕшлĕ решенисене сӳтсе явас тата йышăнас ĕçе хутшăнма право пур.

Ку право çапла пурнăçа кĕрсе пырать: халăх депутачĕсен Совечĕсене, государствăн суйласа лартакан ытти органĕсене суйлама тата суйланма май панипе, пĕтĕм халăхпа пĕрле сÿтсе явас тата сасăлас ĕçе, халăх контролĕне, государство органĕсемпе общество организацийĕсен, обществăлла пултарулăх органĕсен ĕçне, ĕç коллективĕсенчи тата хăйсем пурăнакан вырăнти пухусене хутшăнма май панипе.

**43 статья.** Чăваш АССРĕн кашни гражданинĕн государство органĕсемпе общество организацийĕсене вĕсен ĕçне лайăхлатас пирки сĕнÿсем пама, ĕçри çитменлĕхсене критиклеме право пур.

Должноçри çынсем граждансен сĕнĕвĕсемпе заявленийĕсене палăртнă сроксенче пăхса тухма, вĕсем пирки ответ пама тата кирлĕ мерăсем йышăнма тивĕç.

Критикăшăн хĕсĕрлеме юрамасть. Критикăшăн хĕсĕрлекен çынсене ответ тыттараççĕ.

**44 статья.** Халăх интересĕсемпе килĕшÿллĕн, социализмлă строя çирĕплетес тата аталантарас шутпа Чăваш АССР гражданĕсене çакăн пек ирĕклĕхсем гарантилеççĕ: сăмах, пичет ирĕклĕхĕ, пухусем, митингсем, урамра шествисемпе демонстрацисем ирттермелли ирĕклĕхсем.

Политикăллă çак ирĕклĕхсем ĕççыннисене тата вĕсен организацийĕсене обществăлла çуртсемпе, урамсемпе, площадьсемпе усă курма ирĕк панипе, информацие анлă сарнипе, пичетпе, телевиденипе тата радиопа усă курма май панипе пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

**45 статья.** Коммунизм строительствин тĕллевĕсемпе килĕшÿллĕн Чăваш АССР гражданĕсен общество организацийĕсене — политикăллă активлăхпа пултарулăха аталантарма, вĕсен нумай тĕрлĕ интересĕсене тивĕçтерме пулăшакан организацисене — пĕрлешме право пур.

Общество организацийĕсене хăйсен уставри задачисене ăнăçлă пурнăçламашкăн условисем гарантилеççĕ.

**46 статья.** Чăваш АССР гражданĕсене совесть ирĕклĕхĕ, урăхла каласан, кирек мĕнле тĕне ĕненме е нимĕнле тĕне те ĕненмесĕр пурăнма, тĕн йăлисене тытса пыма е атеизм пропа-

ганди тума право гарантилеҫҫӗ. Тӗне ӗненнӗ пирки хирӗҫӳ кӑларма тата курайманлӑх туйӑмӗ сарма чараҫҫӗ.

Чӑваш АССРӗнче чиркӗве государствӑран, шкула чиркӳрен уйӑрнӑ.

**47 статья.** Ҫемьене государство хӳтӗлет.

Хӗрарӑмпа арҫын хӑйсен ирӗкӗпе килӗшсе мӑшӑрланаҫҫӗ; упӑшкипе арӑмӗ ҫемьери хутшӑнусенче пур енӗпе те пӗр тан.

Ача-пӑча учрежденийӗсем нумай туса тата вӗсене аталантарса, йӑла службипе обществӑлла апатланӑва йӗркелесе тата лайӑхлатса пырса, ача ҫуралсан пособи тӳлесе, нумай ачаллӑ ҫемьесене пособисемпе ҫӑмӑллӑхсем парса, ҫавӑн пекех ҫемьене ытти тӗрлӗ пособисемпе пулӑшусем парса, государство ҫемьене пулӑшса тӑрать.

**48 статья.** Чӑваш АССР гражданӗсене никам тӗкӗнменлӗх гарантилеҫҫӗ. Суд решенийӗсӗр е прокурор санкци памасӑр никама та арестлеме юрамасть.

**49 статья.** Чӑваш АССР гражданӗсене вӗсем пурӑнакан ҫурт-йӗре тӗкӗнмелле маррине гарантилеҫҫӗ. Ҫуртра пурӑнакан ҫынсен кӑмӑлне хирӗҫ унта законлӑ сӑлтавсӑр пырса кӗме никамӑн та право ҫук.

**50 статья.** Граждансен харпӑр пурнӑҫне, хут-ҫырусен, телефонпа калаҫнин тата телеграфпа пӗлтернин вӑрттӑнлӑхне закон хӳтӗлет.

**51 статья.** Ҫынна хисеплесси, граждансен прависемпе ирӗклӗхӗсене сыхласси — мӗнпур государство органӗсен, общество организацийӗсемпе должноҫри ҫынсен тивӗҫӗ.

Чӑваш АССР гражданӗсен хӑйсен чыслӑхӗпе тивӗҫлӗхне, пурнӑҫӗпе сывлӑхне, хӑйсен ирӗклӗхне тата пурлӑхне тапӑннинчен судпа хӳтӗленме право пур.

**52 статья.** Чӑваш АССР гражданӗсен должноҫри ҫынсен, государствӑпа общество органӗсен ӗҫӗсем пирки жалоба пама право пур. Ҫав жалобӑсене законпа ҫирӗплетнӗ йӗркепе тата срокра пӑхса тухмалла.

Должноҫри ҫынсем закона пӑсса, полномочисенчен иртсе граждансен прависене хӗсекен ӗҫсем тунӑ пулсан, ҫавӑн пирки законпа ҫирӗплетнӗ йӗркепе суда жалоба пама юрать.

Чăваш АССР гражданĕсен вĕсене государствăпа общество организацийĕсем, çавăн пекех должноçри çынсем хăйсен служ-бăри обязанноçĕсене пурнăçланă чухне законсăр ĕçсем тунипе кӳнĕ сиеншĕн тӳлеттерме право пур.

**53 статья.** Правăсемпе ирĕклĕхсене пурнăçа кĕртессине гражданин хăйĕн обязанноçĕсене пурнăçланинчен уйăрма çук.

Чăваш АССР гражданинĕ СССР Конституцине, РСФСР Конституцине, Чăваш АССР Конституцине, совет законĕсене пăхăнса тăма, социализмла пурнăç йĕркисене хисеплеме, совет гражданинĕн чаплă ятне чыслăн упрама тивĕç.

**54 статья.** Чăваш АССРĕн ĕçлеме пултаракан кашни гражданинĕн обязанноçĕ тата чыслă тивĕçĕ вăл — обществăшăн усăллă ĕçĕн хăй суйласа илнĕ вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесси, ĕç дисциплинине пăхăнасси. Обществăшăн усăллă ĕçрен пăрăнни социализм обществин принципĕсемпе килĕшсе тăмасть.

**55 статья.** Чăваш АССР гражданинĕ социализмлă харпăрлăха упрама тата çирĕплетсе пыма тивĕç. Чăваш АССР гражданинĕн тивĕçĕ — государствăпа общество пурлăхне çаратнине тата салатса пĕтернине хирĕç кĕрешесси, халăх пурлăхне упрасси.

Социализмлă харпăрлăха хапсăнакансене законпа айăплаççĕ.

**56 статья.** Чăваш АССР гражданинĕ Совет государствин интересĕсене хӳтĕлеме, унăн хăвачĕпе авторитетне çирĕплетмешкĕн пулăшма тивĕç.

Социализмлă Тăван çĕршыва хӳтĕлесси — Чăваш АССРĕн кашни гражданинĕн тасаран та таса тивĕçĕ.

Тăван çĕршыва сутни вăл — халăх умĕнчи чи пысăк преступлени.

**57 статья.** СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсен ретĕнче çар службинче тăрасси — Чăваш АССР гражданĕсен хисеплĕ тивĕçĕ.

**58 статья.** Чăваш АССРĕн кашни гражданинĕн тивĕçĕ — ытти граждансен наци тивĕçлĕхне хисеплесси, нумай нациллĕ Совет государствинчи нацисемпе халăхсен туслăхне çирĕплетесси.

**59 статья.** Чăваш АССР гражданинĕ ытти çынсен прависемпе законлă интересĕсене хисеплеме, обществăна хирĕçле ĕç-

семпе пӗр килӗшмесӗр кӗрешме, обществӑри йӗркелӗхе сыхламашкӑн пур майсемпе те пулӑшма тивӗҫ.

**60 статья.** Чӑваш АССР гражданӗсем ачасене воспитани парассишӗн тӑрӑшма, вӗсене обществӑшӑн усӑллӑ ӗҫе хатӗрлеме, социализмлӑ обществӑн тивӗҫлӗ членӗсем пулмашкӑн пӑхса ӳстерме тивӗҫ. Ачисем хӑйсен ашшӗ-амӑшӗшӗн тӑрӑшма, вӗсене пулӑшса тӑма тивӗҫ.

**61 статья.** Чӑваш АССР гражданӗсем ҫутҫанталӑка упрама, унӑн пуянлӑхӗсене сыхлама тивӗҫ.

**62 статья.** Истори палӑкӗсене тата культурӑн ытти пуянлӑхӗсене упраса хӑварма тӑрӑшасси — Чӑваш АССР гражданӗсен тивӗҫӗпе обязанноҫӗ.

**63 статья.** Чӑваш АССР гражданинӗн интернационалла тивӗҫӗ вӑл — ытти ҫӗршывсенчи халӑхсемпе туслӑ пурӑнассине тата килӗштерсе ӗҫлессине аталантарма, пӗтӗм тӗнчери мире сыхласа хӑварма тата ҫирӗплетме пулӑшасси.

## III. ЧӐВАШ АССРӗн НАЦИПЕ ГОСУДАРСТВО ТАТА АДМИНИСТРАЦИПЕ ТЕРРИТОРИ ТЫТӐМӖ

### 6 сыпӑк.

### ЧӐВАШ АССРӗ — РСФСР СОСТАВӖНЧИ АВТОНОМИЛЛӖ РЕСПУБЛИКА

**64 статья.** Чӑваш Автономиллӗ Социализмлӑ Совет Республики вӑл — Росси Федерациллӗ Социализмлӑ Совет Республикин составне кӗрекен социализмлӑ совет государстви.

ССР Союзӗпе РСФСР прависен шутне кӗмен хӑйне тивӗҫлӗ ыйтусене Чӑваш АССРӗ хӑй тӗллӗн татса парать.

**65 статья.** Чӑваш АССР территорине вӑл килӗшмесӗр никам та улӑштарма пултараймасть.

**66 статья.** Чӑваш Автономиллӗ Социализмлӑ Совет Республики хӑйӗн государство влаҫӗпе управленин аслӑ органӗсем урлӑ татса пама тивӗҫлӗ ӗҫсем ҫаксем пулаҫҫӗ:

1) Чӑваш АССР Конституцине йышӑнасси, унта улшӑнусем кӗртесси;

2) Чӑваш АССР Конституцине мӗнле пурнӑҫласа пынине контроллесе тӑрасси;

3) Чӑваш АССР законӗсене кӑларасси;

4) государствӑри йӗркелӗхе, граждансен прависемпе ирӗклӗхӗсене сыхласси;

5) ССР Союзӗпе РСФСР законодательствипе килӗшӳллӗн государство влаҫӗпе управленин республикӑри тата вырӑнсенчи органӗсене йӗркелемелли, вӗсем ӗҫлемелли йӗрке туса хурасси;

6) социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑра пӗр пӗтӗм политика тытса пырасси, Чӑваш АССР экономикине ертсе пырасси, наукӑпа техника прогресӗшӗн тӑрӑшасси, ҫутҫанталӑк ресурсӗсемпе тӗрӗс усӑ курмалли тата вӗсене сыхламалли ӗҫсене пурнӑҫласси;

7) Чӑваш АССРӗн экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн государство планӗсене, Чӑваш АССР государство бюджетне туса хатӗрлесе ҫирӗплетесси тата вӗсене пурнӑҫлани ҫинчен тӑратнӑ отчетсене ҫирӗплетесси; районсен тата республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласен бюджечӗсене пурнӑҫа кӗртессине ертсе пырасси;

8) ССР Союзӗпе РСФСР законодательствипе килӗшӳллӗн Чӑваш АССР государство бюджетне туса хума каякан тупӑшсене палӑртасси;

9) халӑх хуҫалӑхӗн республикӑна пӑхӑнса тӑракан отраслӗсене, республикӑна тата вырӑнти органсене пӑхӑнса тӑракан пӗрлешӳсемпе предприятисене ертсе пырасси;

10) ССР Союзӗпе РСФСР законодательствипе килӗшӳллӗн ҫӗрпе, ҫӗр айӗнчи пуянлӑхсемпе, вӑрмансемпе, шывсемпе мӗнле усӑ курнине контроллесе тӑрасси; таврари ҫутҫанталӑка сыхласси;

11) ҫурт-йӗр хуҫалӑхӗпе коммуналлӑ хуҫалӑха, суту-илӳпе обществӑлла апатлану ӗҫне, халӑхӑн йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес ӗҫе, ҫурт-йӗр строительствине, хуласемпе халӑх пурӑнакан ытти вырӑнсене тирпей-илем кӗртессине, ҫул-йӗр тӑвас ӗҫе тата транспорта ертсе пырасси;

12) Чăваш АССРĕнчи халăха вĕрентес ĕçе, культурăпа наука организацийĕсемпе учрежденийĕсене, сывлăха сыхлас ĕçе, физкультурăпа спорта, социаллă обеспечение ертсе пырасси; историпе культура палăкĕсене сыхласси;

13) республика пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтусене татса парасси.

**67 статья.** РСФСРпа ССР Союзĕн государство влаçĕпе управленин аслă органĕсем урлă Чăваш АССРĕ РСФСРа тата ССР Союзне тивĕçлĕ ыйтусене татса пама хутшăнать.

Чăваш АССРĕ хăйĕн территорийĕнче экономикăпа социаллă пурнăçа комплекслă аталантарать, çак территорире ССР Союзĕпе РСФСР полномочийĕсене пурнăçа кĕртме пулăшать, ССР Союзĕпе РСФСРăн государство влаçĕпе управленин аслă органĕсен решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырать.

Хăйне тивĕçлĕ ыйтусемпе Чăваш АССРĕ Союза тата республикăна (РСФСРа) пăхăнса тăракан предприятисен, учрежденисемпе организацисен ĕçне координацилесе тата контроллесе тăрать.

**68 статья.** СССР Конституцийĕпе тата РСФСР Конституцийĕпе килĕшӳллĕн, социализмлă Тăван çĕршыва хӳтĕлесси государствăн чи кирлĕ функцийĕсен шутне кĕрет, пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăрать.

Социализм çĕнтерĕвĕсене, совет халăхĕн мирлĕ ĕçне, государствăн суверенитечĕпе территори пĕр пĕтĕмлĕхне хӳтĕлес тĕллевпе СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсене йĕркеленĕ, пурне те тивĕç çар обязанноçĕ туса хунă.

Чăваш АССРĕ çĕршыв хăрушсăрлăхĕпе оборона хăватне тĕреклетме, СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсене мĕн кирлине пĕтĕмпех парса тăма хутшăнать.

Государство органĕсен, общество организацийĕсен, должноçри çынсен тата граждансен çĕршыв хăрушсăрлăхне сыхлас, унăн оборона хăватне тĕреклетес ĕçри тивĕçĕсене ССР Союзĕн законодательствинче палăртса параççĕ.

**69 статья.** Чăваш АССРĕнче вăрçа пропагандăлама юрамасть.

**70 статья.** СССР тата РСФСР законĕсене Чăваш АССР территорийĕнче обязательнăй йĕркепе пурнăçламалла.

7 сыпăк.

## ЧĂВАШ АССРĕн АДМИНИСТРАЦИПЕ ТЕРРИТОРИ ТЫТĂМĔ

**71 статья.** Чăваш АССРĕ хăй мĕнле районсене пайланмаллине тата республикăн администрацине территори тытăмĕн ытти ыйтăвĕсене РСФСР законодательствипе килĕшӳллĕн татса парать.

**72 статья.** Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республикине Улатăр, Элĕк, Патăръел, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсем, республикăна пăхăнакан хуласем — Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле кĕреççĕ.

# IV. ЧĂВАШ АССРĕнчи ХАЛĂХ ДЕПУТАЧĔСЕН СОВЕЧĔСЕМ ТАТА ВĔСЕНЕ СУЙЛАМАЛЛИ ЙĔРКЕ

8 сыпăк.

## ХАЛĂХ ДЕПУТАЧĔСЕН СОВЕЧĔСЕН СИСТЕМИ ТАТА ВĔСЕН ĔÇĔН ПРИНЦИПĔСЕМ

**73 статья.** Халăх депутачĕсен Совечĕсем— Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ, халăх депутачĕсен район, хула, хуласенчи район, поселок тата ял Совечĕсем — государство влаçĕн органĕсен пĕр пĕтĕм системи пулса тăраççĕ.

**74 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн полномочи срокĕ — пилĕк çул.

Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен полномочи срокĕ — икĕ çул çурă.

Халăх депутачĕсен Совечĕсен суйлавне çав Советсен полномочи срокĕ тухиччен икĕ уйăхран кая хăвармасăр палăртса хураççĕ.

**75 статья.** Халăх депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕсем татса памалли чи кирлĕ ыйтусене вĕсен сессийĕсенче пăхса тухса татса параççĕ.

Халăх депутачĕсен Совечĕсем яланхи комиссисем суйлаççĕ, ĕç тăвакан тата хушакан органсем, çавăн пекех хăйсене пăхăнса тăракан ытти органсем туса хураççĕ.

**76 статья.** Халăх депутачĕсен Совечĕсем халăх контролĕн органĕсене туса хураççĕ, халăх контролĕ государство контрольне ĕççыннисен предприятисенчи, колхозсенчи, учреждениसемпе организацисенчи общественнăлла контролĕпе çыхăнтарса пырать.

Халăх контролĕн органĕсем государство планĕсемпе заданийĕсене мĕнле пурнăçласа пынине контроллесе тăраççĕ; государство дисциплинине пăснине хирĕç, вырăнти интерессене мала хунине, харпăр хăй ведомствишĕн кăна тăрăшнине хирĕç, хуçасăрлăхпа тирпейсĕрлĕхе, волокитăпа бюрократизма хирĕç кĕрешеççĕ; государство аппарачĕн ĕçне лайăхлатма пулăшаççĕ.

**77 статья.** Халăх депутачĕсен Совечĕсем тÿррĕнех тата хăйсем туса хунă органсем урлă государствăпа хуçалăх строительствин тата социаллă пурнăçпа культура строительствин мĕнпур отраслĕсене ертсе пыраççĕ, решенисем йышăнаççĕ, вĕсене пурнăçлас ĕçе йĕркелеççĕ, решенисем мĕнле пурнăça кĕнине контроллесе тăраççĕ.

**78 статья.** Халăх депутачĕсен Советĕсен ĕçне çак никĕс çинче йĕркелеççĕ: ыйтусене коллективлă, ирĕклĕ, ĕçлĕхлĕн сÿтсе явса татса параççĕ, хăйсен ĕçĕ çинчен халăха пĕлтерсе тăраççĕ, ĕç тăвакан тата хушакан органсем, Советсем туса хунă ытти органсем Советсем умĕнче тата халăх умĕнче тăтăшах отчет туса параççĕ, вĕсен ĕçне граждансене анлăн хутшăнтараççĕ.

Халăх депутачĕсен Совечĕсем тата вĕсем туса хуракан органсем хăйсен ĕçĕ çинчен, йышăннă решенисем çинчен халăха тăтăшах пĕлтерсе тăраççĕ.

## 9 с ы п ă к.

## СУЙЛАВ СИСТЕМИ

**79 статья.** Халăх депутачĕсен мĕнпур Совечĕсен депутачĕсене пурне те тивĕç, пĕр тан тата тÿрех сасăламалли суйлав правипе усă курса, вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

**80 статья.** Депутатсене суйласси пурне те тивĕçлĕ ĕç пулса тăрать. Чăваш АССРĕн 18 çул тултарнă мĕнпур гражданĕсен, закон йĕркипе çирĕплетсе ăсран тухнă тесе йышăннă çынсемсĕр пуçне, суйлама тата суйланма право пур.

**81 статья.** Депутатсене пĕртанлăх йĕркипе суйлаççĕ: кашни суйлавçăн пĕр сасă пур; мĕнпур суйлавçăсем суйлава пĕр тан тивĕçпе хутшăнаççĕ.

**82 статья.** Депутатсене тӳрех суйлаççĕ: халăх депутачĕсен мĕнпур Совечĕсен депутачĕсене граждансем тӳррĕнех суйлаççĕ.

**83 статья.** Депутатсене суйланă чухне вăрттăн сасăлаççĕ: суйлавçăсем хăйсен кăмăлне мĕнле палăртнине контроллеме юрамасть.

**84 статья.** Депутата суйлама кандидатсем тăратма Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн, професси союзĕсен, Çамрăксен Пĕтĕм Союзри Ленинла Коммунистла Союзĕн организацийĕсен, коопераци организацийĕсемпе ытти обществăлла организацисен, ĕç коллективĕсен, çавăн пекех çар çыннисен çар чаçĕсенчи пухăвĕсен право пур.

Чăваш АССР гражданĕсемпе общество организацийĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсен политикăпа ĕçри пахалăхĕсене тата вĕсен çын пахалăхĕсене пур енчен те ирĕклĕн сӳтсе явма гаранти параççĕ, çавăн пекех пухусенче, пичетре, телевиденипе радио тăрăх агитацилеме право пур.

Халăх депутачĕсен Совечĕсен суйлавне ирттерессипе çыхăннă расходсене государство шутĕнчен тӳлеççĕ.

**85 статья.** Халăх депутачĕсен Совечĕсене суйлав округĕсем тăрăх депутатсем суйлаççĕ.

Чăваш АССР гражданинĕ, ялан тенĕ пекех, халăх депутачĕсен икĕ Советĕнчен ытла суйланма пултараймасть.

Советсен суйлавне суйлав комиссийĕсем ирттереççĕ, вĕсене общество организацийĕсен, ĕç коллективĕсен тата çар çыннисен çар чаçĕсенчи пухăвĕсен представителĕсенчен тăваççĕ.

Халăх депутачĕсен Совечĕсен суйлавне ирттермелли йĕркене ССР Союзĕн, РСФСРăн, Чăваш АССРĕн законĕсемпе палăртаççĕ.

**86 статья.** Суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене наказсем параççĕ.

Халăх депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕсем суйлавçăсен наказĕсене пăхса тухаççĕ, вĕсене экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн планĕсене туса хатĕрленĕ чухне тата бюджет палăртнă чухне шута илеççĕ, наказсене пурнăçа кĕртессине йĕркелеççĕ, вĕсем мĕнле пурнăçланса пыни çинчен граждансене пĕлтерсе тăраççĕ.

## 10 сыпăк.

## ХАЛĂХ ДЕПУТАЧĔ

**87 статья.** Депутатсем халăх депутачĕсен Совечĕсенче халăхсен полномочиллĕ представителĕсем пулса тăраççĕ.

Советсен ĕçне хутшăнса, депутатсем государство, хуçалăх тата социаллă пурнăçпа культура строительствин ыйтăвĕсене татса параççĕ, Советсен решенийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе йĕркелеççĕ, государство органĕсен, предприятисен, учреждениссемпе организацисен ĕçне контроллесе тăраççĕ.

Хăйĕн ĕçĕнче депутат пĕтĕм государство интересĕсене тĕп вырăна хурать, суйлав округĕнчи халăхăн ыйтăвĕсене шута илет, суйлавçăсен наказĕсене пурнăçа кĕртсе пырассишĕн тăрăшать.

**88 статья.** Депутат хăйĕн полномочийĕсене производствăри е службăри ĕçе пăрахмасăр пурнăçласа пырать.

Советăн сессийĕсем вăхăтĕнче, çавăн пекех законра кăтартса панă йĕркепе депутат полномочийĕсене пурнăçлама ытти чухне те депутата производствăри е службăри обязанноçсене пурнăçлассинчен хăтараççĕ, унăн яланхи ĕç вырăнĕнчи вăтам ĕç укçи сыхланса юлать.

**89 статья.** Депутатăн тивĕçлĕ государство органĕсемпе должноçри çынсене запрос пама право пур, вĕсем çав запрос пирки Совет сессийĕнче ответ пама тивĕç.

Депутатăн государствăпа обществăн мĕнпур органĕсенче, предприятисенче, учреждениссенче, организацисенче депутат

ĕçĕпе ыйту лартма тата хăй лартнă ыйтусене пăхса тухнă çĕре хутшăнма право пур. Государствăпа обществăн тивĕçлĕ органĕсен, предприятисен, учрежденисен тата организацисен руководителĕсем депутата çийĕнчех йышăнма, унăн сĕнĕвĕсене палăртнă сроксенче пăхса тухма тивĕç.

**90 статья.** Депутата хăйĕн прависемпе обязанноçĕсене пĕр чăрмавсăр та эффективлăн пурнăçа кĕртсе пыма условисем туса параççĕ.

Депутатсен никам тĕкĕнменлĕхне, çавăн пекех депутат ĕçĕн ытти гарантийĕсене депутатсен статусĕ çинчен калакан Законпа тата ССР Союзĕн законодательствин ытти акчĕсенче, РСФСР тата Чăваш АССР законодательствин акчĕсенче палăртса хураççĕ.

**91 статья.** Депутат хăйĕн ĕçĕпе Совет ĕçĕ çинчен суйлавçăсем умĕнче, çавăн пекех хăйне депутата суйлама кандидата тăратнă коллективсемпе общество организацийĕсем умĕнче отчет туса пама тивĕç.

Суйлавçăсен шанăçне тӳрре кăларайман депутата, закон кăтартса панă йĕркепе, суйлавçăсен ытларахăшĕ йышăннипе кирек хăш вăхăтра та каялла чĕнсе илме пултараççĕ.

## V. ЧĂВАШ АССРĕн ГОСУДАРСТВО ВЛАÇĔПЕ УПРАВЛЕНИН АСЛĂ ОРГАНĔСЕМ

### 11 сыпăк.

### ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔ

**92 статья.** Чăваш АССРĕн государство влаçĕн аслă органĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ пулса тăрать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн СССР Конституцийĕ, РСФСР Конституцийĕ тата çак Конституци тăрăх Чăваш АССРĕн тивĕçĕ шутне кĕртнĕ мĕнпур ыйтусене татса пама правомочи пур.

Чăваш АССР Конституцине йышăнас, унта улшăнусем кĕр-

тес, Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планĕсене, Чăваш АССР государство бюджетне тата вĕсене пурнăçлани çинчен калакан отчетсене çирĕплетес, хăйне отчет паракан органĕсем туса хурас ĕçсене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ кăна тăвать.

Чăваш АССР законĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ йышăнать.

**93 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ 200 депутатран тăрать, вĕсене халăх йышĕ енчен пĕр пек суйлав округĕсем тăрăх суйлаççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ, хăй суйлакан Мандат комиссийĕ тăратнипе, депутатсен полномочийĕсене йышăнни çинчен, суйлав пирки калакан законодательствăна пăснă пулсан вара — уйрăм депутатсене суйланине тĕрĕс мар тесе хаклани çинчен решени йышăнать.

**94 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Председательне тата унăн икĕ заместительне суйлать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсене ертсе пырать, унăн шалти ĕçĕсене йĕркелесе тăрать.

**95 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн сессийĕсене çулталăкра икĕ хут пухаççĕ.

Черетсĕр сессисене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ хăй пуçарнипе е Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен пĕрре виççĕмĕш пайĕнчен кая мар сĕннипе пухаççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ унăн ларăвĕсенчен, çавăн пекех вĕсем хушшинче Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн яланхи комиссийĕсемпе ытти комиссийĕсем irттерекен ларусенчен тăрать.

**96 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Советĕнче законсем кăлармашкăн пуçару тума Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн яланхи тата ытти комиссийĕсен, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен, Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн, Чăваш АССР Прокурорĕн право пур.

Законсем кăлармa пуçару тумалли правăпа çавăн пекех общество организацийĕсем республикăри органсем урлă тата вĕсене тивĕçлĕ органсем урлă усă кураççĕ.

**97 статья.** Законсен проекчĕсене тата Чăваш АССР Верховнăй Советĕнче пăхса тухма тăратнă ытти ыйтусене унăн ларăвĕсенче сӳтсе яваççĕ. Кирлĕ пулсан, закон проектне е тивĕçлĕ ыйтăва малтанлăха е çĕнĕрен пăхса тухма пĕр-пĕр комиссие е темиçе комиссие пама пултараççĕ.

Чăваш АССР законĕсене, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн постановленийĕсемпе ытти акчĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн мĕнпур депутачĕсен ытларахăшĕ вĕсем майлă сасăланипе йышăнаççĕ.

Чăваш АССР законĕсен проекчĕсене тата автономиллĕ республикăн государство пурнăçĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтăвĕсене, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ е Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ йышăннă тăрăх, халăхпа сӳтсе явмашкăн тăратма пултараççĕ.

**98 статья.** Чăваш АССР законĕсене, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн постановленийĕсемпе ытти акчĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕпе Секретарĕ алă пусса чăвашла тата вырăсла пичетлесе кăлараççĕ.

**99 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕн Чăваш АССР Министрĕсен Советне, министрсене тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ туса хуракан ытти органсен руководителĕсене, çавăн пекех Чăваш АССР территорийĕнче вырнаçнă, Союза тата республикăна (РСФСРа) пăхăнса тăракан предприятисемпе учреждениесен тата организацисен руководителĕсен Чăваш АССРĕн тивĕçĕ шутне кĕрекен ыйтусемпе запрос пама право пур. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ е запрос илнĕ должноçри çын Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн çав сессийĕнче сăмахпа е çырса ответ пама тивĕç.

**100 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ килĕшмесĕр, унăн сессийĕсем хушшинчи тапхăрта вара Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ килĕшмесĕр уголовнăй йĕркепе ответ тыттарма,

арестлеме е суд йĕркипе административлă взыскани пама пултараймаççĕ.

**101 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумне — Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ялан ĕçлекен, хăйĕн пĕтĕм ĕçĕ çинчен ун умĕнче отчет тăвакан тата унăн сессийĕсем хушшинче Чăваш АССРĕн государство влаçĕн аслă органĕн функцийĕсене çак Конституцире палăртса хунинчен иртмесĕр пурнăçласа пыракан органа суйлать.

**102 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумне депутатсенчен суйлаççĕ, ун составне çаксем кĕреççĕ: Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ, Председателĕн икĕ заместителĕ, Президиум Секретарĕ тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн вуникĕ членĕ.

**103 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ:

1) Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕсене ирттерессине палăртать;

2) Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн сессийĕсене пухать;

3) Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн яланхи комиссийĕсен ĕçне координацилет;

4) Чăваш АССР Конституцине мĕнле пăхăнса пынине контроллесе тăрать;

5) Чăваш АССР законĕсене мĕнле ăнланмаллине кăтартса парать;

6) халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕçне ертсе пырать;

7) района пăхăнакан хуласем, хуласенчи районсем туса хурать, вĕсене ят парать тата вĕсен ячĕсене улăштарать, çавăн пекех халăх пурăнакан ытти вырăнсен ятне улăштарать, çак ыйтусемпе йышăннă решенисене РСФСР Верховнăй Совечĕн Президиумне çирĕплетме тăратать;

8) ял Совечĕсем туса хурать, вĕсене пăрахăçлать, халăх пурăнакан вырăнсене рабочи поселоксен, курортлă тата дачăллă поселоксен категорине кĕртет, çавăн пекех РСФСР законодательствипе килĕшӳллĕн республикăн администрацие территори тытăмĕн ытти ыйтăвĕсене татса парать;

9) Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕсем-

пе распоряженийӗсем, халӑх депутачӗсен район тата хула (республикӑна пӑхӑнса тӑракан хуласен) Совечӗсен решенийӗсем законпа килӗшсе тӑмаҫҫӗ пулсан, вӗсене пӑрахӑҫлать;

10) Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Хисеп Грамотипе наградӑлать; Чӑваш АССРӗн хисеплӗ ячӗсене тӑвать, ҫав ятсене парать;

11) Чӑваш АССР Конституцийӗпе тата законӗсемпе палӑртса хунӑ ытти полномочисене пурнӑҫласа пырать.

**104 статья.** Верховнӑй Совет сессийӗсем хушшинчи тапхӑрта Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ:

1) кирлӗ чухне Чӑваш АССРӗн вӑйра тӑракан законодательство акчӗсене улшӑнусем кӗртет;

2) закон палӑртнӑ йӗркепе республикӑна пӑхӑнса тӑракан районсемпе хуласем туса хурать, вӗсене ят парать тата вӗсен ятне улӑштарать;

3) Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ сӗннипе министерствӑсем, государство комитечӗсем тата государство управленийӗн Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗ тӑвакан ытти органӗсене туса хурать тата вӗсене пӑрахӑҫлать;

4) Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ панӑ сӗнӳ тӑрӑх Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн составне кӗрекен уйрӑм ҫынсене должноҫран хӑтарать тата уйӑрса лартать.

Кайран ҫаксене черетлӗ сессире ҫирӗплетме тӑратать.

**105 статья.** Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ указсем кӑларать, постановленисем йышӑнать.

**106 статья.** Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн полномочи вӑхӑчӗ иртнӗ хыҫҫӑн Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ Чӑваш АССРӗн ҫӗнӗрен суйланӑ Верховнӑй Совечӗ ҫӗнӗ Президиум туса хуриччен хӑйӗн полномочийӗсемпе усӑ курать.

Чӑваш АССРӗн ҫӗнӗрен суйланӑ Верховнӑй Советне Чӑваш АССРӗн унччченхи Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ суйлав хыҫҫӑн икӗ уйӑхран кая хӑвармасӑр пухать.

**107 статья.** Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗ татса памалли ыйтусене малтанлӑха пӑхса тухса хатӗрлеме, ҫавӑн пекех Чӑваш АССР законӗсене тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе унӑн Президиумӗн ытти решенийӗсене пурнӑҫа кӗртмешкӗн пу-

лăшма, государство органĕсемпе оранизацийĕсен ĕçне контроллесе тăма Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ депутатсенчен яланхи комиссисем суйлать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ кирлĕ тесе шутлать пулсан, кирек мĕнле ыйтупа та следстви, ревизи комиссийĕсем тата ытти комиссисем туса хурать.

Государствăпа обществăн мĕнпур органĕсем, организацисем тата должноçри çынсем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн комиссийĕсем хушнине тума, вĕсене кирлĕ материалсемпе документсем пама тивĕç.

Комиссисен сĕнĕвĕсене государствăпа общество органĕсен, учрежденисемпе организацисен обязательнăй йĕркепе пăхса тухмалла. Пăхса тухнин результачĕсем çинчен е йышăннă мерăсем çинчен комиссисене палăртнă срокра пĕлтермелле.

**108 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ государствăн хăйне отчет паракан мĕнпур органĕсен ĕçне контроллесе тăрать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Чăваш АССР Халăх контроль комитетне туса хурать, çав комитет Чăваш АССРĕнчи халăх контроль органĕсен системине ертсе пырать.

**109 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тата унăн органĕсен ĕç йĕркине Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Регламентĕнче тата Чăваш АССР Конституцийĕпе килĕшӳллĕ кăларакан Чăваш АССРĕн ытти законĕсенче палăртса хураççĕ.

## 12 сыпăк.

## ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ

**110 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ — Чăваш АССР Правительстви — Чăваш АССРĕн государство влаçĕн ĕç тăвакан тата хушакан аслă органĕ пулса тăрать.

**111 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Советне Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ туса хурать, унăн составне çаксем кĕреççĕ: Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ, Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ тата Председатель заместителĕсем, министрсем, государство комитечĕсен председателĕсем

тата республика Верховнăй Совечĕ туса хуракан государство управленийĕн ытти органĕсен руководителĕсем.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ панă сĕнӳ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Чăваш АССР Правительствин составне Чăваш АССРĕнчи ытти органсемпе организацисен руководителĕсене кĕртме пултарать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хăйĕн полномочийĕсене пурнăçлама пăрахни çинчен Чăваш АССРĕн çĕнĕрен суйланă Верховнăй Советне унăн пĕрремĕш сессийĕнче пĕлтерет.

**112 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ умĕнче ответлă, ăна ответ парать, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн сессийĕсем хушшинчи тапхăрта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ умĕнче ответлă, ăна отчет парать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хăйĕн ĕçĕ çинчен Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ умĕнче тăтăшах отчет тăвать.

**113 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн государство управленийĕн Чăваш АССР тивĕçĕ шутне кĕртнĕ мĕнпур ыйтăвĕсене, вĕсем Конституци тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн компетенцине кĕмеççĕ пулсан, татса пама правомочи пур.

Хăйĕн полномочийĕсене пурнăçласа, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çак ĕçсене тăвать:

1) халăх хуçалăхне тата социаллă пурнăçпа культура строительствине ертсе пырассине йĕркелесе тăрать; халăх пурнăçне лайăхлатас, унăн культурине ӳстерес, наукăпа техникăна аталантарас, çутçанталăк ресурсĕсемпе тĕрĕс усă курас тата вĕсене сыхлас енĕпе мерăсем палăртса хурать, вĕсене пурнăçа кĕртет; укçа-тенкĕпе кредит системине çирĕплетмелли, государство страхованине тата учетпа статистикăн пĕр пĕтĕм системине организацилемелли мерăсене пурнăçа кĕртме пулăшать: хаксем енĕпе, ĕçшĕн тӳлес тата социаллă пулăшу парас енĕпе пĕр пĕтĕм политика тытса пыма хутшăнать; промышленность, строительство, ялхуçалăх предприятийĕсемпе пĕрлешĕвĕсене, транспортпа çыхăну предприятийĕсене, çавăн пекех республикăна

тата вырӑнти органсене пӑхӑнса тӑракан ытти организацисемпе учрежденисене ертсе пырассине йӗркелет;

2) Чӑваш АССРӗн экономикӑпа социаллӑ пурнӑç аталанӑвӗн çулленхи тата малашлӑх валли тӑвакан государство планӗсене, Чӑваш АССР государство бюджетне туса хатӗрлет, вӗсене Чӑваш АССР Верховнӑй Советне тӑратать; государство планӗсемпе бюджетне пурнӑçлама мерӑсем йышӑнать; Чӑваш АССР Верховнӑй Советне плансене тултарни тата бюджета пурнӑçлани çинчен отчетсем тӑратать;

3) автономиллӗ республикӑн, районсемпе хуласен экономикипе социаллӑ пурнӑçне комплекслӑ аталантарассине йӗркелет; Чӑваш АССРӗн тивӗçӗ шутне кӗрекен ыйтусемпе Союза тата республикӑна (РСФСРа) пӑхӑнса тӑракан предприятисен, учрежденисен, организацисен ӗçне координацилет тата контроллесе тӑрать;

4) государство интересӗсене хӳтӗлеме, социализмлӑ харпӑрлӑха, обществӑри йӗркелӗхе сыхлама, граждансен прависемпе тата ирӗклӗхӗсемпе усӑ курмашкӑн май пама тата çав правӑсемпе ирӗклӗхсене хӳтӗлеме мерӑсем йышӑнать;

5) СССР Конституцийӗ палӑртса хунӑ шайра государство хӑрушсӑрлӑхне сыхлама тата çӗршывӑн оборона хӑватне çирӗплетме мерӑсем йышӑнать;

6) кирлӗ пулсан, хуçалӑх, социаллӑ пурнӑçпа культура строительстви енӗпе ӗçлеме Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ çумӗнче комитетсем, управленисем тата ытти ведомствӑсем тӑвать;

7) халӑх депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен ӗç тӑвакан комитечӗсен ӗçне ертсе пырать.

**114 статья.** Халӑх хуçалӑхне ертсе пырас ӗçпе çыхӑннӑ ыйтусене тата государство управленийӗн ытти ыйтӑвӗсене татса пама Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн яланхи органӗ — Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Президиумӗ ӗçлет, унӑн составне Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ, Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн пӗрремӗш заместителӗ тата Председатель заместителӗсем, çавӑн пекех, Чӑваш

АССР Министрĕсен Совечĕ çинчен калакан Законпа килĕшӳллĕн, Правительствăн ытти членĕсем кĕреççĕ.

**115 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ ССР Союзĕн, РСФСРăн тата Чăваш АССРĕн законодательство акчĕсене, СССР Министрĕсен Совечĕн тата РСФСР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕсемпе распоряженийĕсене никĕсе хурса, вĕсене пурнăçа кĕртме постановленисемпе распоряженисем кăларать, вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе йĕркелет, вĕсем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслет. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕсемпе распоряженийĕсене Чăваш АССРĕн пĕтĕм территорийĕнче обязательнăй йĕркепе пурнăçа кĕртсе пымалла.

**116 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн, хăйĕн компетенцийĕ май панă таран, халăх депутачĕсен район тата хула (республикăна пăхăнса тăракан хуласен) Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсен решенийĕсемпе распоряженийĕсене пăрахăçлама право пур.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн Чăваш АССР министерствисен, государство комитечĕсен тата хăйне пăхăнса тăракан ытти органсен акчĕсене пăрахăçлама право пур.

**117 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР министерствисен, государство комитечĕсен тата хăйне пăхăнса тăракан ытти органсен ĕçне пĕрлештерсе ертсе пырать.

Чăваш АССР министерствисем, государство комитечĕсем тата государство управленийĕн ытти органĕсем хăйсене хушнă управлени отраслĕсене ертсе пырассине е отрасльсем хушшинчи управлени ĕçне Чăваш АССР Министрĕсен Советне, çавăн пекех РСФСРăн тивĕçлĕ министерствине е государство комитетне пăхăнса пурнăçласа пыраççĕ.

Чăваш АССР министерствисем, государство комитечĕсем тата государство управленийĕн ытти органĕсем хăйсене хушнă управлени сферисенчи ĕçсемшĕн тата вĕсене аталантарассишĕн ответлă пулса тăраççĕ; СССР, РСФСР, Чăваш АССР законĕсене тата СССР Верховнăй Совечĕпе унăн Президиумĕн, РСФСР Верховнăй Совечĕпе унăн Президиумĕн, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе унăн Президиумĕн ытти решенийĕсене, СССР Министрĕсен Совечĕн, РСФСР Министрĕсен Совечĕн тата Чă-

ваш АССР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕсемпе распоряженийĕсене, ССР Союзĕпе РСФСРăн тивĕçлĕ министерствисемпе государство комитечĕсен акчĕсене никĕсе хурса тата вĕсене пурнăçа кĕртес шутпа, хăйсен компетенцийĕнчен иртмесĕр, актсем кăлараççĕ, вĕсене пурнăçлассине организацилеççĕ, пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăраççĕ.

**118 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн тата унăн Президиумĕн компетенцине, вĕсен ĕç йĕркине, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе государствăн ытти органĕсем хушшинчи хутшăнусене, çавăн пекех Чăваш АССРĕн мĕнле министерствăсем, государство комитечĕсем тата государство управленийĕн ытти органĕсем пулмаллине Конституци тăрăх Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çинчен калакан Законпа палăртаççĕ.

## VI. ЧĂВАШ АССРĕнчи ГОСУДАРСТВО ВЛАÇĔПЕ УПРАВЛЕНИН ВЫРĂНТИ ОРГАНĔСЕМ

### 13 сыпăк.

### ХАЛĂХ ДЕПУТАЧĔСЕН ВЫРĂНТИ СОВЕЧĔСЕМ

**119 статья.** Районсенче, хуласенче, хуласенчи районсенче, поселоксенче, ялсенче халăх депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕсем государство влаçĕн органĕсем пулса тăраççĕ.

**120 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсем вырăнти пĕлтерĕшлĕ мĕнпур ыйтусене пĕтĕм государство интересĕсемпе Совет территорийĕнче пурăнакан граждансен интересĕсене шута илсе татса пыраççĕ, государствăн аслăрах органĕсен решенийĕсене пурнăçа кĕртеççĕ, халăх депутачĕсен кĕçĕнрех Совечĕсен ĕçне ертсе пыраççĕ, республика (АССР, РСФСР) тата пĕтĕм Союз пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явма хутшăнаççĕ, вĕсем тăрăх хăйсен сĕнĕвĕсене параççĕ.

Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсем хăйсен территорийĕнче государство, хуçалăх, социаллă пурнăçпа культура строительствине ертсе пыраççĕ; экономикăпа социаллă пурнăç атала-

нăвĕн планĕсене тата вырăнти бюджета, вĕсене пурнăçлани çинчен калакан отчетсене çирĕплетеççĕ; хăйсене пăхăнса тăракан государство органĕсене, предприятисене, учреждениссемпе организацисене ертсе пыраççĕ; законсене пурнăçлассине, государствăри тата обществăри йĕркелĕхе, граждансен прависене сыхлассине йĕркелеççĕ; çĕршывăн оборона хăватне ӳстерсе пыма пулăшаççĕ.

**121 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсем полномочисем пур таран хăйсен территорийĕнче экономикăпа социаллă пурнăçа комплекслă аталантарассине йĕркелеççĕ; çав территорире вырнаçнă, аслăрах органсене пăхăнса тăракан предприятисем, учреждениссемпе организацисем законодательствăна пăхăнса ĕçленине контроллесе тăраççĕ; çĕрпе усă курас, çутçанталăка сыхлас енĕпе, строительство енĕпе, ĕç вăйĕн ресурсĕсемпе усă курас, халăха кирлĕ таварсем туса кăларас, халăхăн социаллă пурнăçпа культура тата йăла ыйтăвĕсемпе ытти ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе вĕсен ĕçне координацилесе тата контроллесе тăраççĕ.

**122 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсем хăйсене ССР Союзĕн, РСФСРăн тата Чăваш АССРĕн законодательстви тăрăх панă полномочисен шайĕнче решенисем йышăнаççĕ. Вырăнти Советсен решенийĕсене Совет территорийĕнче вырнаçнă мĕнпур предприятисен, учреждениссемпе организацисен, çавăн пекех должноçри çынсемпе граждансен обязательнăй йĕркепе пурнăçламалла.

**123 статья.** Халăх депутачĕсен район, хула, хуласенчи район Совечĕсен сессийĕсене вĕсен ĕç тăвакан комитечĕсем çулталăкра тăватă хутран кая мар пухаççĕ.

Халăх депутачĕсен поселок тата ял Совечĕсен сессийĕсене вĕсен ĕç тăвакан комитечĕсем çулталăкраултă хутран кая мар пухаççĕ.

Сессисенче халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсем ССР Союзĕн, РСФСРăн тата Чăваш АССРĕн законодательстви тăрăх вĕсен тивĕçĕ шутне кĕртнĕ кирек мĕнле ыйтусене те пăхса тухса татса пама пултараççĕ. Мĕнле-мĕнле ыйтусене сессисенче кăна пăхса тухмаллине тата татса памаллине халăх депутачĕ-

сен вырӑнти Совечӗсем ҫинчен калакан законсенче палӑртса хураҫҫӗ.

**124 статья.** Вырӑнти Советсем татса памалли ыйтусене малтанлӑха пӑхса тухса хатӗрлеме, ҫавӑн пекех Советсен решенийӗсене пурнӑҫа кӗртмешкӗн пулӑшма, государство органӗсен, предприятисен, учрежденисемпе организацисен ӗҫне контроллесе тӑма халӑх депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем депутатсенчен яланхи комиссисем суйлаҫҫӗ.

Вырӑнти Советсен яланхи комиссийӗсен сӗнӗвӗсене государствӑпа обществӑн тивӗҫлӗ органӗсен, предприятисен, учрежденисен тата организацисен обязательнӑй йӗркепе пӑхса тухмалла. Пӑхса тухнин результачӗсем е йышӑннӑ мерӑсем ҫинчен палӑртнӑ срокра комиссисене пӗлтермелле.

**125 статья.** Халӑх депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем, кӗҫӗнрех Советсен ӗҫне ертсе пынӑ май, кӗҫӗнрех Советсен акчӗсем законодательствӑпа килӗшсе тӑмаҫҫӗ пулсан, ҫав актсене пӑрахӑҫлама пултараҫҫӗ.

**126 статья.** Халӑх депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем хӑйсен ӗҫне общество организацийӗсемпе тата ӗҫ коллективӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса туса пыраҫҫӗ, чи кирлӗ ыйтусене граждансемпе сӳтсе явма тӑрантаҫҫӗ, граждансене яланхи комиссисен, ӗҫ тӑвакан комитетсен тата Советсене отчет паракан ытти органсен ӗҫне хутшӑнтараҫҫӗ, вырӑнти ирӗклӗ обществӑсене ӗҫлеме пулӑшаҫҫӗ, халӑхӑн обществӑлла пултарулӑхне аталантараҫҫӗ.

## 14 сыпӑк.

## ХАЛӐХ ДЕПУТАЧӖСЕН ВЫРӐНТИ СОВЕЧӖСЕН ӖҪ ТӐВАКАН КОМИТЕЧӖСЕМ

**127 статья.** Халӑх депутачӗсен вырӑнти Совечӗсем депутатсенчен суйласа лартнӑ ӗҫ тӑвакан комитетсем ҫав Советсен ӗҫ тӑвакан тата хушакан органӗсем пулса тӑраҫҫӗ; унта председатель, председатель заместителӗсем, секретарь тата членсем кӗреҫҫӗ.

Ӗҫ тӑвакан комитетсем хӑйсене суйласа лартнӑ Советсем

умĕнче, çавăн пекех ĕç коллективĕсен пухăвĕсенче тата граждансем пурăнакан вырăнти пухусенче çулталăкра пĕр хутран кая мар отчет туса параççĕ.

**128 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсем хăйсене суйласа лартнă Совета та, ĕç тăвакан тата хушакан аслăрах органа та тӳррĕнех отчет параççĕ.

**129 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсем, вĕсене суйланă Советсен тата государство влаçĕпе управленин аслăрах органĕсен решенийĕсене пурнăçласа, тивĕçлĕ Советсен территорийĕнче государство, хуçалăх тата социаллă пурнăçпа культура строительствине ертсе пыраççĕ.

Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсен, Советсен сессийĕсем кăна татса памалли ыйтусемсĕр пуçне, Советсен тивĕçне кĕрекен мĕнпур ыйтусене татса пама право пур.

Ĕç тăвакан комитетсем Советсен сессийĕсене пухаççĕ, Советсен яланхи комиссийĕсен ĕçне координацилеççĕ; депутатсене хăйсен полномочийĕсене пурнăçлама пулăшаççĕ; Советсен тата государствăн аслăрах органĕсен решенийĕсене, çавăн пекех суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлассине йĕркелеççĕ; хăйсене пăхăнса тăракан управлени органĕсене ертсе пыраççĕ.

**130 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсем хăйсен компетенцийĕнчен иртмесĕр решенисем йышăнаççĕ тата распоряженисем кăлараççĕ.

**131 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсен халăх депутачĕсен кĕçĕнрех Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсен решенийĕсене тата распоряженийĕсене пăрахăçлама право пур.

**132 статья.** Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен полномочийĕсем тухсан, вĕсен ĕç тăвакан комитечĕсем халăх депутачĕсен çĕнĕ суйлаври Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсене суйласа хăваричченех хăйсен полномочийĕсемпе усă кураççĕ.

**133 статья**. Халăх депутачĕсен район, хула, хуласенчи район Совечĕсем ĕç тăвакан комитетсен пайĕсене тата управленийĕсене туса хураççĕ, вĕсем хăйсен ĕçĕнче Советсене тата вĕсен ĕç

тăвакан комитечĕсене, çавăн пекех государство управленийĕн тивĕçлĕ аслăрах органĕсене пăхăнса тăраççĕ.

Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсен мĕнле пайсемпе управленисем пулмаллине тата вĕсене туса хумалли йĕркене ССР Союзĕн, РСФСРăн тата Чăваш АССРĕн законодательствинче палăртаççĕ.

## VII. ЧĂВАШ АССРĕн ЭКОНОМИКĂПА СОЦИАЛЛĂ ПУРНĂÇ АТАЛАНĂВĔН ГОСУДАРСТВО ПЛАНĔ. ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО БЮДЖЕЧĔ

**134 статья.** Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планĕ РСФСР экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать.

Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн çулленхи планĕсемпе малашлăх планĕсене РСФСРăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн тĕп задачисемпе тата çул-йĕрĕсемпе килĕшӳллĕн туса хатĕрлеççĕ, вĕсем республика территорийĕнче экономикăпа социаллă пурнăçа комплекслă аталантарма май параççĕ.

**135 статья.** Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планне, РСФСР экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планне тĕпе хурса, Чăваш АССР министерствисен, государство комитечĕсен тата государство управленийĕн ытти органĕсен, халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен планĕсен проекчĕсемпе усă курса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ туса хатĕрлет.

Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планне Чăваш АССР территорийĕнче вырнаçнă Союза тата республикăна (РСФСРа) пăхăнса тăракан предприятисен, учрежденисемпе организацисен планĕсен тĕп кăтартăвĕсене кĕртеççĕ.

Экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн планĕсене предприятисен, учрежденисемпе организацисен коллективĕсен, çавăн

пекех общество организацийĕсен сĕнĕвĕсене шута илсе туса хатĕрлеççĕ.

**136 статья.** Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планне сӳтсе явма Чăваш АССР Верховнăй Советне тăрататть.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн доклачĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Планпа бюджет комиссийĕн тата ытти яланхи комиссийĕсен заключенийĕсем тăрăх Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планне сӳтсе явса çирĕплетет.

**137 статья.** Чăваш АССР государство бюджечĕ РСФСРăн пĕрлĕхлĕ государство бюджечĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать. Вăл Чăваш АССР республика бюджетне тата вырăнти бюджетсене пĕрлештерсе тăрать.

**138 статья.** Чăваш АССР государство бюджетне Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ РСФСРăн тата Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планĕсемпе, РСФСР государство бюджечĕпе килĕшӳллĕн туса хатĕрлет, ăна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн доклачĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Планпа бюджет комиссийĕн тата ытти яланхи комиссийĕсен заключенийĕсем тăрăх çирĕплетет.

**139 статья.** Чăваш АССРĕн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн государство планне тултарни тата Чăваш АССР государство бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчета Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ пăхса тухса çирĕплетет. Плансене тултарнин тата бюджета пурнăçланин пĕтĕмĕшле кăтартăвĕсене пурне те пĕлтерме пичетлесе кăлараççĕ.

## VIII. СУД ĔÇĔ, АРБИТРАЖ, ПРОКУРОР НАДЗОРĔ

### 15 сыпăк.

### СУД ТАТА АРБИТРАЖ

**140 статья.** Чăваш АССРĕнче суд ĕçне суд çеç туса пырать.

Чăваш АССРĕн сучĕсем çаксем: Чăваш АССР Верховнăй Сучĕ тата районсенчи (хуласенчи) халăх сучĕсем.

Чăваш АССР сучĕсене йĕркелессине тата вĕсен ĕç йĕркине СССР, РСФСР законĕсенче тата çак Конституцире палăртаççĕ.

**141 статья.** Чăваш АССРĕнчи судсене пурне те судьясене тата халăх заседателĕсене суйланипе туса хураççĕ.

Район (хула) халăх сучĕсен халăх судйисене районти (хулари) граждансем пурне те тивĕç, пĕр тан тата тӳрех суйламалли суйлав правипе усă курса, вăрттăн сасăласа пилĕк çуллăха суйлаççĕ. Район (хула) халăх сучĕсен халăх заседателĕсене граждансен пухăвĕсенче, вĕсем ĕçлекен е пурăнакан вырăнсем тăрăх, уççăн сасăласа икĕ çул çурăлăха суйлаççĕ.

Судьясемпе халăх заседателĕсем суйлавçăсем умĕнче е хăйсене суйланă органсем умĕнче ответлă пулса тăраççĕ, вĕсене отчет параççĕ, суйлавçăсем судьясемпе халăх заседателĕсене законпа палăртнă йĕркепе каялла чĕнсе илме пултараççĕ.

**142 статья.** Чăваш АССР Верховнăй Сучĕ Чăваш АССРĕнчи чи аслă суд органĕ пулса тăрать, республикăри район (хула) халăх сучĕсем суд тунине сăнаса, тĕрĕслесе тăрать.

Чăваш АССР Верховнăй Судне Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ пилĕк çуллăха суйлать, унăн составне çаксем кĕреççĕ: Председатель, унăн заместителĕсем, суд членĕсем тата халăх заседателĕсем.

**143 статья.** Гражданла тата уголовнăй ĕçсене пур судсенче те коллегипе пăхса тухаççĕ; пĕрремĕш инстанцири судра халăх заседателĕсем хутшăннипе пăхса тухаççĕ. Суд тунă чухне халăх заседателĕсем судьян мĕнпур прависемпе усă кураççĕ.

**144 статья.** Судьясемпе халăх заседателĕсем никама та мар, закона çеç пăхăнса тăраççĕ.

**145 статья.** Чăваш АССРĕнче суд тăвасси граждансем законпа суд умĕнче пĕр тан пулни çинче никĕсленсе тăрать.

**146 статья.** Ĕçсене пур судсенче те уççăн пăхса тухаççĕ. Ĕçсене судăн хупă ларăвĕсенче пăхса тухма законпа палăртнă йĕркепе çеç юрать. Ун пек чухне суд ĕçĕн мĕнпур правилисене пăхăнмалла.

**147 статья.** Айăпланакан çынна хӳтĕленме право параççĕ.

**148 статья.** Чăваш АССРĕнче суд ĕçне вырăс чĕлхипе е чăваш чĕлхипе, е çав вырăнта пурăнакан çынсен ытларахăшĕ ка-

лаҫакан челхепе тăваҫҫĕ. Суд ĕҫне хутшăнакан ҫынсем суд ĕҫне туса пыракан чĕлхене пĕлмеҫҫĕ пулсан, вĕсене тăлмач урлă ĕҫ материалĕсемпе тĕплĕн паллашма тата суд ĕҫĕсене хутшăнма, судра тăван чĕлхепе тухса калама право параҫҫĕ.

**149 статья.** Суд приговорĕсĕр тата законпа килĕшмесĕр никама та преступлени тунă тесе айăплама, ҫавăн пекех уголовнăй йĕркепе наказани пама юрамасть.

**150 статья.** Граждансемпе организацисене юридически пулăшу пама адвокатсен коллегийĕсем ĕҫлеҫҫĕ. Законодательствăпа кăтартса панă чухне граждансене тӳлевсĕр юридически пулăшу параҫҫĕ.

Адвокатурăна мĕнле йĕркелемеллине тата унăн ĕҫ йĕркине ССР Союзĕпе РСФСР законодательствинче палăртса хураҫҫĕ.

**151 статья.** Гражданла тата уголовнăй ĕҫсем тăрăх суд тунă ҫĕре общество организацийĕсемпе ĕҫ коллективĕсен представителĕсем хутшăнма пултараҫҫĕ.

**152 статья.** Предприятисемпе учреждениссм тата организацисем хушшинчи хуҫалăх енĕпе тухса тăракан тавлашусене государство арбитражĕн органĕсем хăйсен компетенцийĕнчен иртмесĕр татса параҫҫĕ.

16 сыпăк.

## ПРОКУРАТУРА

**153 статья.** Чăваш АССР территорийĕнчи мĕнпур министерствăсем, государство комитечĕсемпе ведомствăсем, предприятисем, учреждениссмпе организацисем, халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕҫ тăвакан тата хушакан органĕсем, колхозсем, коопераци организацийĕсемпе ытти обществăлла организацисем, должноҫри ҫынсем, ҫавăн пекех граждансем законсене тĕрĕс, пур ҫĕрте те пĕр пек пурнăҫласа пынине СССР Генеральнăй прокурорĕ, ăна пăхăнса тăракан РСФСР прокурорĕ, Чăваш АССР прокурорĕ тата кĕҫĕнрех прокурорсем чи аслă шайра сăнаса тĕрĕслесе тăраҫҫĕ.

**154 статья.** Чăваш АССР прокурорне СССР Генеральнăй прокурорĕ уйăрса лартать.

Районсемпе хуласенчи прокурорсене РСФСР прокурорĕ уйăрса лартать, СССР Генеральнăй прокурорĕ çирĕплетет.

**155 статья.** Чăваш АССР прокурорĕн тата кĕçĕнрех мĕнпур прокурорсен полномочи срокĕ — пилĕк çул.

**156 статья.** Прокуратура органĕсем хăйсен полномочийĕсене вырăнти нимĕнле органсене те пăхăнмасăр, СССР Генеральнăй прокурорне кăна пăхăнса, пурнăçласа пыраççĕ.

## IX. ЧĂВАШ АССР ГЕРБĔ, ФЛАГĔ ТАТА СТОЛИЦИ

**157 статья.** РСФСР Государство гербĕ Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республикин государство гербĕ пулса тăрать. Вăл çакăн пек: хĕрлĕ фон çине ўкернĕ хĕвел пайăркисемпе çутатнă çурлапа мăлатука пучахсенчен тунă кăшăл варрине вырнаçтарнă, ун çийĕн: «РСФСР» тесе вырăсла, «Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!» тесе вырăсла тата чăвашла çырнă. «РСФСР» тесе çырни айне пĕчĕкрех саспаллисемпе вырăсла тата чăвашла «Чăваш АССРĕ» тесе çырнă. Гербăн çўлти пайĕнче — пилĕк вĕçлĕ çăлтăр.

**158 статья.** РСФСР Государство флагĕ Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республикин Государство флагĕ пулса тăрать. Вăл çакăн пек: тўркĕтеслĕх евĕрлĕ хĕрлĕ хăмач тăрăхĕнче аври çумĕнчен пĕтĕм флаг анлăшĕпе çутă кăвак хăю пур, вăл флаг тăршшĕн сакăр пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ пулмалла. Хĕрлĕ хăмачăн сулахайри çўлти кĕтесĕнче ылтăн тĕслĕ çурлапа мăлатук, вĕсем çийĕн ылтăн хăюпа çавăрнă пилĕк вĕçлĕ хĕрлĕ çăлтăр ўкернĕ. Ун айне ылтăн саспаллисемпе вырăсла тата чăвашла «Чăваш АССРĕ» тесе çырнă. Флаг сарлакăшĕпе тăршшĕ — 1 : 2 чухлĕ.

**159 статья.** Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республикин столици — Шупашкар хули.

## X. ЧĂВАШ АССР КОНСТИТУЦИЙĔ ВĂЙРА ТĂНИ ТАТА ĂНА УЛĂШТАРМАЛЛИ ЙĔРКЕ

**160 статья.** Чăваш АССР государство органĕсен мĕнпур законĕсемпе ытти акчĕсене Чăваш АССР Конституцине никĕсе хурса тата унпа килĕшӳллĕн кăларассĕ.

**161 статья.** Чăваш АССР Конституцине Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ йышăннă тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн мĕнпур депутачĕсен ытларахăшĕ, иккĕ виççĕмĕш пайĕнчен кая мар сасăласа йышăннă решенипе улăштарассĕ.

ТУПМАЛЛИ

I. ЧĂВАШ АССРĕн ОБЩЕСТВО СТРОЙĕПЕ ПОЛИТИКА НИКĕÇĕСЕМ . . . . . . . . . . . . . 3
1 сыпăк. Политика системи . . . . . . . . —
2 сыпăк. Экономика системи . . . . . . . . 5
3 сыпăк. Социаллă аталанупа культура . . . . . 8
II. ГОСУДАРСТВО ТАТА УЙРАМ ÇЫН . . . . . . 10
4 сыпăк. Чăваш АССР гражданлăхĕ. Граждансен право пĕртанлăхĕ . . . . . . . . . . —
5 сыпăк. Чăваш АССР гражданĕсен тĕп прависем, ирĕклĕхĕсемпе обязанноçĕсем . . . . . . . . 11
III. ЧĂВАШ АССРĕн НАЦИПЕ ГОСУДАРСТВО ТАТА АДМИНИСТРАЦИПЕ ТЕРРИТОРИ ТЫТĂМĔ . . . . . . . 18
6 сыпăк. Чăваш АССРĕ — РСФСР составĕнчи автономиллĕ республика . . . . . . . . —
7 сыпăк. Чăваш АССРĕн администрацproperly территори тытăмĕ . 21
IV. ЧĂВАШ АССРĕнчи ХАЛĂХ ДЕПУТАЧĕСЕН СОВЕЧĕСЕМ ТАТА ВĕСЕНЕ СУЙЛАМАЛЛИ ЙĕРКЕ . . . . . . . —
8 сыпăк. Халăх депутачĕсен Совечĕсен системи тата вĕсен ĕçĕн принципĕсем . . . . . . . . . —
9 сыпăк. Суйлав системи . . . . . . . . . 22
10 сыпăк. Халăх депутачĕ . . . . . . . . . 24
V. ЧĂВАШ АССРĕн ГОСУДАРСТВО ВЛАÇĕПЕ УПРАВЛЕНИН АСЛĂ ОРГАНĕСЕМ . . . . . . . . . . . . 25
11 сыпăк. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ . . . . . . —
12 сыпăк. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ . . . . 30
VI. ЧĂВАШ АССРĕнчи ГОСУДАРСТВО ВЛАÇĕПЕ УПРАВЛЕНИН ВЫРĂНТИ ОРГАНĕСЕМ . . . . . . . . . . 34
13 сыпăк. Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсем . . . . . —

14 сыпăк. Халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕç тăвакан комитечĕсем . . . . . . . . . . . 36
VII. ЧĂВАШ АССРĕн ЭКОНОМИКĂПА СОЦИАЛЛĂ ПУРНĂÇ АТАЛАНĂВĔН ГОСУДАРСТВО ПЛАНĔ. ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО БЮДЖЕЧĔ . . . . . . . . . . 38
VIII. СУД ĔÇĔ, АРБИТРАЖ, ПРОКУРОР НАДЗОРĔ . . . . . 39
15 сыпăк. Суд тата арбитраж . . . . . . . . . —
16 сыпăк. Прокуратура . . . . . . . . . . . 41
IX. ЧĂВАШ АССР ГЕРБĔ, ФЛАГĔ ТАТА СТОЛИЦИ . . . . 42
X. ЧĂВАШ АССР КОНСТИТУЦИЙĔ ВĂЙРА ТĂНИ ТАТА ĂНА УЛĂШТАРМАЛЛИ ЙĔРКЕ . . . . . . . . . 43

# КОНСТИТУЦИЯ

(ОСНОВНОЙ ЗАКОН)

## ЧУВАШСКОЙ АВТОНОМНОЙ СОВЕТСКОЙ СОЦИАЛИСТИЧЕСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

На чувашском языке

Сдано в набор 20/VI-1978 г. Подписано к печати 13/VII-1978 г. Бумага типографская № 1. Формат 60×84/16. Физ. печ. л. 3,0. Усл. печ. л. 2,79. Учетно-изд. л. 2,15. Заказ № 2530. Тираж 10000 экз.
Цена 5 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

**Чăваш Автономиллĕ Социализмлă Совет Республикин Конституцийĕ** (Тĕп Законĕ) Чăваш АССРĕн тăххăрмĕш суйлаври Верховнăй Совечĕн черетсĕр саккăрмĕш сессийĕнче 1978 çулхи майăн 31-мĕшĕнче йышăннă. Шупашкар, Чăвашиздат, 1978.

44 с.

5 пус.